28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
сентябрĕн
29
шăматкун
189(6940) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Шкулсемпе больницăсем валли вутă çителĕклĕ хатĕрлер

Тăватă çул хушши йывăр вăрçă пынă вăхăтра та пирĕн партипе правительство культура ĕçне малалла аталантарассишĕн, халăх сывлăхне сыхлассишĕн питĕ тимлĕн тăрăшрĕç. Культурăпа социальнăй мероприятисене пурнăçа кĕртме пирĕн государство çулсерен нумай миллионшар тенкĕ укçа парса тăрать. Пирĕн Чăваш республикин бюджетĕнче çав расходсем чи пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Халĕ эпир мирлĕ пурнăçпа пурăнма тытăнтăмăр. Пирĕн ĕнтĕ культурăпа сывлăх учрежденийĕсемшĕн татах та тимлĕрех тăрăшма вăрçă чухнехи пек мар, пысăкрах майсем пур. Çав майсемпе усă курма пĕлни кирлĕ.

Вырăнти советсен—райисполкомсемпе ял Совечĕсен пысăк та ответлă задачисенчен пĕри вăл шкулсемпе больницăсене халăхи мирлĕ пурнăçра лайăхрах ĕçлеттермелле тăвасси пулса тăрать. Анчах çак задачăна пур çĕрте те мар-ха ăнăçлă пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Хăшпĕр райисполкомсемпе ял Совет председателĕсенчен час-часах çакăн пек калаçнине илтме пулать: «Пирĕн халĕ шкулпа больницă шухăшĕ мар-ха, тырпул пухса кĕртмелле, авăн çапмалла, сахал-и унта ĕç». Теприсем тата çапларах та калаçкалаççĕ: «шкулшăн пире сĕлтисем вăрсас çук, ытти ĕçсене тумасан вара—лекме пултарать», теççĕ. Ку вăл ĕç çине пачах та совет работникĕ пек пăхни пулмасть.

Чăн та, хальхи вăхăтра ĕç нумай. Анчах çуллахи пушăрах тапхăрта та, июнĕн 20-мĕшĕпе июлĕн 20-мĕшĕ хушшинче шкулсемпе сывлăх учрежденийĕсем валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе уйăхлăх пынă чухне, хăшпĕр райисполкомсемпе ял Совечĕсен председателĕсем çав ĕçе иккĕмĕш вырăнта тăракан ĕç вырăнне хунă. Вĕсем уйчухнехи пушăрах вăхăтпа усă курса юлман, тем кĕтсе тăнă е халĕ те тем кĕтеççĕ. Анчах вăхăт кĕтмест, хĕл сывхарсах килет. Республикăри чылай шкулсемпе больницăсен хĕлле хутма вутă çук.

Акă, сăмахран, Çĕрпӳ районĕнчи шкулсем валли хĕлле хутма пурĕ 4.600 кубометр вутă кирлĕ, вĕсенчен 1800 кубометр касса хатĕрленĕ, турттарасса вара пурĕ те 190 кубометр çеç турттарнă. Çĕрпӳри сывлăх учрежденийĕсен те ку тĕлĕшпе ĕç çакнашкалах япăх. Çав вутта кам хатĕрлесе, турттарса парасса кĕтет-ши Çĕрпӳ райсовет исполкомĕн председателĕ Хăбаров юлташ? Пирĕн чылай районсенчи шкулсемпе больницăсен коллективĕсем çу каçиччен хăйсен вăйĕпе вутă хатĕрлесе турттарнă. Кам çине шанаççĕ çĕрпӳсем? Мĕншĕн вĕсем учительсемпе вĕренекенсене, больницă коллективне вутă хатĕрлеме организацилемен?

Шкулсемпе больницăсем валли вутă хатĕрлес ĕç çавăн пекех Чкаловски, Пăрачкав, Сĕнтĕр районĕсенче те япăх пырать. Сĕнтĕр районĕнче сăмахран, Нискассипе Ярославка шкулĕсен çеç 1946 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен хутмалăх вутă пур, ытти 26 шкулăн вара пĕр вутсыппи те çук. Мĕн пирки ӳпкелешмелле сĕнтĕрсен? Вĕсем вăрманта тенĕ пекех пурăнаççĕ, кунта шкулсемшĕн ӳркенмесĕр, тимлĕн тăрăшса ĕçлени кăна çитмест.

Вăтам шкулсем валли вутă хатĕрлес ĕç вара уйрăмах япăх тăрать. Кашни вăтам шкула тенĕ пекех виç-тăватă ял Совечĕнчи ялсенчен е ик-виçĕ районран вĕренме çӳреççĕ. Акă, сăмахран, Муркаш районĕнчи Тивĕш вăтам шкулне ачасем Красноармейски, Ишлей, Муркаш районĕсенчи ялсенчен вĕренме çӳреççĕ. Анчах пĕр район та шкул валли вутă хатĕрлесшĕн мар. Кашни пĕр-пĕрин çине тӳнтерме пăхать. Чăн та ĕнтĕ, «çичĕ çын куçĕ пĕр ачан куçне упрайман» тенĕ пек пулса тухать.

Çуллахи тар хĕлле ăшăтать. Халăхăн çак ăслă сăмахне асра тытакансем çуллахи вăхăтра хăйсем валли вутă хатĕрлес тесе хĕрсех ĕçленĕ. Акă, сăмахран, Шупашкарти поликлиникăн, ача çуратмалли çуртăн, туберкулез диспансерĕн коллективĕсем, хăйсем вăйĕпе çителĕклĕ вутă хатĕрлесе, хăйсен вăйĕпех турттарса та хунă. Уйрăмах поликлиника коллективĕн (директорĕ П. Н. Осипов юлташ) ĕçне палăртмалла. Вĕсем хăйсем валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе çава тухнăранпах хĕруллĕн ĕçленĕ. Халĕ вĕсем никама та ӳпкелемеççĕ. Çав вăхăтрах Шупашкарти больницăпа трахом институчĕ хĕлле сивĕпе аптрама пултараççĕ. Мĕн чăрмантарнă вĕсене вутă хатĕрлеме? Тӳрех калас пулать, ĕçе организацилеме пĕлменни çеç чăрмантарнă.

Вăхăт сахал юлчĕ. Кĕçех акă çул пăсăлса кайма пултарать. Хальхи лайăхрах кунсемпе усă курса юлмалла. Хуçалăх организацийĕсемпе предприятисен тата колхозсен шкулсемпе больницăсене вутă турттарма пулăшмалла. Шупашкар хулинчи хăшпĕр предприятисем шкулсене шеф йĕркипе лайăх пулăшса тăраççĕ, вĕсем хăйсен автомашинисемпе, лашисемпе вутă турттарса параççĕ. Общественноçа пур çĕрте те çавăн пекех ăнăçлă организацилеме пулать.

Чылай çĕрте райисполкомсемпе ял Совечĕсем шкулсемпе больницăсене хуçалăхра кирлĕ укçа-тенке вăхăтра памаççĕ, çавна пула çак учрежденисем хăйсем валли кирлĕ вутта вăхăтра тӳлесе илеймеççĕ. Ку çитменлĕхе пĕтермелле.

ВКП(б) райкомĕсен те шкулсемпе сывлăх учрежденийĕсем çине тимлĕнрех çавăрăнса пăхни кирлĕ. Парти райкомĕсемшĕн хăйсен районĕсенче иккĕмĕш вырăнта тăракан ĕçсем пулма пултараймаççĕ. Çамрăк ăрăва лайăх вĕрентсе çитĕнтересси, халăх сывлăхне сыхласси пирĕн партишĕн яланах чи паха задачăсенчен пĕри пулнă. Анчах хăшпĕр çĕрте партин вырăнти ертсе пыракан работникĕсем çав ĕçсене манăçа хăварнă тĕслĕхсем те пулкалаççĕ-ха. Сăмахран, Улатăрти хула больницин вутă çукпа пĕрех. Шкулсемпе больницăсем валли вутă хатĕрлемелли уйăхлăх пынă вăхăтра ВКП(б) Улатăр хула комитечĕн секретарĕ Шерстюк юлташ: «больницăсем валли вутă хатĕрлесси пирки решени çук, уйăхлăх шкулсем тĕлĕшпе кăна пырать», тесе каласса ларнă. Çапла вара лайăх вăхăта ахаль ирттерсе янă. Кун пек ĕç вăл парти работникне тивĕçлĕ ĕç мар.

Шкулсемпе больницăсем валли вутă хатĕрлес ĕçе хуласемпе ялсенчи общественноçа, комсомолецсемпе çамрăксене анлăн явăçтарас пулать. Шкулсемпе сывлăх учрежденийĕсем хĕллехи вăхăтра пĕр чăрмавсăр ĕçлеччĕр тесен, вĕсене вутă халĕ, çул пăсăличчен, хатĕрлесе памалла.

Тырпул—çĕршывăн вăйхăвачĕпе тĕрекĕ

Çумăр çăвать пулсан—витнĕ итемре авăн çапар, чĕрĕ кĕлтене авăна хывса типĕтер, хатĕрлев пунктне тырă татта-сыпписĕр ăсатса тăрар, государство умĕнчи парăма хăвăртрах парса татар!

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТĂВАС ĔÇ СЕНТЯБРĔН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(Процентпа)

РАЙОНСЕМ	Кĕрхи çĕртме туна
Çĕрпӳ	49,4
Чурачăк	38,3
Сĕнтĕр	37,6
Красноармейски	34,7
Шупашкар	33,5
Шăхасан	33,1
Октябрьски	33,1
Сĕнтĕрвăрри	33,0
Етĕрне	31,6
Елчĕк	31,2
Калинино	29,4
Ишлей	29,1
Вăрнар	28,6
Вăрмар	27,0
Чкаловски	22,1
Куславкка	18,2
Элĕк	17,2
Советски	16,9
Первомайски	16,8
Шăмăршă	15,1
Тăвай	14,4
Йĕпреç	14,3
Комсомольски	13,8
Муркаш	13,6
Хĕрлĕ Чутай	12,8
Сĕмĕрле	12,6
Канаш	11,3
Улатăр	9,6
Пăрачкав	5,1
Кувакино	2,5

Кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан Хĕрлĕ Ялавлă колхоз (председателĕ В. Зайцев), Тăрмăш ял Советĕнчи «Красное знамя» колхоз (председателĕ П. Варламов), Пушкин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ А. Васильев юлташ) кĕрхи çĕртме сухине туса пĕтернĕ.

Халĕ пур колхозсенче те авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕç ăнăçлă пырать. «Хунав», «Ново-Тоскаево», «Осоавиахим», «Журавлевка», «Ново-Ишеряково» Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем, пурĕ 10 колхоз, государствăна тырă парса татнă.

КОМБАЙНПА 330 ГЕКТАР ВЫРСА ПУХНĂ

Йĕпреç МТС-ĕнчи комбайнер Фаддей Семенов юлташ хăй çине илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçланă. Вăл комбайнпа 330 гектар вырса пухнă, 100 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Çуншăн ăна МТС дирекцийĕ ĕçкунĕ çумне 25 пăт тĕштырă хушса тӳлет. Ф. Семенов юлташ халĕ «Красный водник» колхозра ĕçлет. Комбайнпа тырă вырса пухас ĕçĕн мастерĕ Андрей Иванов та 250 гектар вырса пухнă. МТС комбайнсемпе тырă вырмалли плана 118 процент ытла тултарнă.

Малта пыракан колхоз

ÇЕМĔРЛЕ. Янтăшри «Комбайн» колхоз кĕске вăхăтрах пĕр тăккаламасăр тырă вырса пĕтерчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем пур ĕçре те кулленхи ĕç нормине ытлашшипех тултарса пычĕç. Кĕрхи тырăсене те пысăк пахалăхпа акса хăварчĕç.

Колхоз сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 2.573 пăт тырă парса, государствăна тырă памалли çулталăкри плана тултарчĕ.

«Комбайн» колхоз (председателĕ И. Осипов юлташ) вăрçă вăхăтĕнче те малта пынă, кăçал та районта чи малта пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем хальхи вăхăтра хăвăртрах авăн çапса тата çĕрулми кăларса пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ.

Ан. ТАНЬКОВ.

Килес çулшăн государствăна тырă параççĕ

СОВЕТСКОЕ, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Государствăна тырă парса татнă колхозсен шучĕ районра йышлăлансах пырать. Паянхи кун тĕлне 22 колхоз государствăна тырă памалли плана пĕтĕмпех тултарса килес çулшăн тырă параççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Дмитриев юлташ)—276 пăт, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Петухов юлташ) — 286 пăт, «Сталинград» колхоз (председателĕ Иванов юлташ) — 284 пăт, «Электросвет» колхоз (председателĕ Михайлов юлташ)—383 пăт, Суворов ячĕпе тăракан колхоз (председателе Михайлов юлташ)—288 пăт, районĕпе пурĕ 4.227 пăт планран ирттерсе панă. «Новый быт», «Красный партизан», «Трактор» колхозсем те çулталăкри плана тултарса килес çулшăн пама тытăнчĕç.

Н. ПУШКИН.

ГОСУДАРСТВĂНА ÇĔРУЛМИ ПАРАÇÇĔ

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи чылай колхозсем государствăна çĕрулми пама тытăнчĕç. «Большевик» колхоз 1.345 килограмм, «Красная звезда» колхоз 1.451 килограмм, «Пищевик» колхоз 1.450 килограмм, «Заря» колхоз 724 килограмм, «Наркомюст», «Коминтерн», Буденный ячĕпе тăракан колхозсем паянхи кун тĕлне государствăна 400—500 килограмм çĕрулми леçсе пачĕç. Çĕрулми парас ĕç районра куллен кун вăйланса пырать.

Ф. ИЛЬИН.

812 ВĂКĂРПА УСĂ КУРАÇÇĔ

Шăмăршă районĕнчи колхозсенче Майракаллă шултра выльăхсемпе анлăн усă кураççĕ. Районĕпе пурĕ 812 вăкăрпа тата ĕнепе ĕçлеççĕ, вĕсеп шутĕнче хăйсен ĕнисемпе ĕçлекен колхозниксем те нумай. «Новая деревня» колхозра 20 вăкăрпа ĕçленĕ. Кĕлтене кунта пĕтĕмпех вăкăрсемпе турттарса пĕтернĕ. Поляков, Кудряшов, Кучуков колхозниксем кашни кунах хăйсен ĕнисемпе 1200 кĕлте турттарнă. Колхоз районра чи малтан государствăна тырă парса татнă, вăл тырра пĕтĕмпех ĕнесемпе тата вăкăрсемпе турттарнă.

Майракаллă шултăра выльăхсемпе усă курнипе пула «Новая деревня» колхоз кĕрхи тырăсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа акса хăварма пултарчĕ. Майракаллă шултăра выльăхсене ĕçе вĕрентессипе уйрăмăнах колхоз председателĕ, орденоносец Давыдов юлташ пикенсе ĕçлет.

(Хамăр корр.)

АГИТАТОРСЕМ ĔÇЛЕМЕÇÇĔ

Тăвай районĕнчи Амалăхри «Горьковская Коммуна» колхозра тырпул пухса кĕртес ĕç çителĕксĕр пырать.

Колхозра тĕштырăсене халĕ те вырса пĕтермен, авăн çапас ĕç кая юлса пырать, капан хывас ĕçе организацилемен, çавăн пекех кĕраки те туса пĕтермен. Кĕрхи çĕртме тума та тытăнман, государствăна тырă парас графика пурнăçласа пымаççĕ. Транспорт бригадине кунта ячĕшĕн кăна тунă.

Агитаторсем начар ĕçлеççĕ. ВКП(б) райкомĕпе райисполком уполномоченнăйĕ В. Орлов юлташ вĕсене ертсе пымасть, час-часах пĕр сăлтавсăр вăрçса хăратса пăсререт. Çавăн пирки те колхозра тырпула пухса кĕртес ĕç кая юлса пырать.

Ф. СПИРИДОНОВ.

КАНТĂР ТАТАÇÇĔ

ИШЛЕЙ, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем 265 гектар кантăр татмалла. Паянхи кун 200 гектар ытла татса пухнă. «Клевер» колхоз 3 гектар кантăра татса пĕтерсе çапнă тата шыва та хутнă. Кунта кăçал кантăр ăнса пулнă, кашни гектартан вăрри кăна 4 центнер ытла тухать.

Çавăн пекех «Осоавиахим», «Красный Октябрь», «Гвардия», «Знамя победы» колхозсем кантăр татса, çапса пĕтернĕ тата шыва хутнă.

В. ГУСЬКОВ.

Коммунистка ертсе пыракан колхоз

Сĕнтĕр районĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхоза ВКП(б) членĕ Е. П. Леонтьева юлташ ертсе пырать. Колхозра агитацие массăллă ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Кашни кунах апат çинĕ вăхăтра агитаторсем çĕнĕ хыпарсене пĕлтереççĕ тата хаçат вуласа параççĕ. Çавна пула колхозра çамрăкки те, ватти те кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ. А. Судеева, П. Харитонова, А. Ф. Судеева (57 çулта) тырă вырма тухнăранпа çурлапа вырса хăйсен ĕç нормине кулленех 150 процент таран тултарнă. Тырпул пухса кĕртес ĕçре 3 жнейкăпа ĕçленĕ. Машинистсем Г. Судеев, И. Сибяков юлташсем кулленхи нормăна 180—200 процент тултарнă. Колхоз сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлнех тырă вырса пĕтернĕ. Пĕтĕм тырăсенчен çурри-не ытла çапса пуçтарнă. Государствăна тырă памалли плана районра чи малтан тултарнă. 8 гектар çинчи вăрлăхлăх клевера вырса пухнă тата çапса шĕкĕлчеме те тытăннă. Паян-ыран çĕрулми кăларса пĕтереççĕ. Кĕрхи çĕртме тумалли плана 60 процент тултарнă.

Колхозра 5 коммунист (пуçламĕш парторганизаци секретарĕ А. И. Харитонов юлташ), вĕсем пурте колхозри пур ĕçре те нормăна ирттерсе тултараççĕ, çав вăхăтрах колхозниксене хаçат вуласа параççĕ тата стена хаçачĕ кăларса тăраççĕ. Колхозри коммунистсем пур ĕçре те пример кăтартаççĕ. Çавăнпа та вĕсен сăмахне колхозниксем юратса, тимлĕн итлеççĕ. Халĕ колхозра çĕрле те, кăнтăрла та авăн çапаççĕ.

П. КОЗЛОВ.

Кок-сагыз лартаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Кăçал районри нумай колхозсем пысăк тухăçлă кок-сагыз туса илчĕç. Алă вĕççĕн шăтăка лартса тунă плантацирен «Красный Борденер» колхоз (председателĕ Петров, кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăн бригадирĕ Р. Петрова) çур гектар çинчен 14 центнер тымар кăларса илнĕ. Кунта кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 45 центнер кок-сагыз тымарне пухса илме шутлаççĕ. Кок-сагыз тымарĕ ытти колхозсенче те пысăк тухăçлă. Кăçал районри 10 колхоз 50 гектар çине кок-сагыза çĕнĕ майпа, тымарне касса лартаççĕ. Халĕ пур колхозсем те тымара яровизацилеме хунă. Кашни гектар валли 2-шер центнер каснă тымар хатĕрленĕ. «Красная звезда» колхоз (председателĕ Иванов, кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен бригадир Кириллов), «Красный Борденер», Войков тата Ильич ячĕпе тăракан колхозсем те кок-сагыз тымарне касса яровизациленĕ. Ыран çак колхозсем кок-сагыз лартма тытăнаççĕ.

А. НИКОЛАЕВ

ВЦСПС-ра

Подсобнăй хуçалăхсемпе совхозсене хĕле кĕме хатĕрлесси çинчен

ВЦСПС, 1.400 подсобнăй хуçалăхпа совхоза тĕрĕслесе, çакна палăртнă: хуçалăхсен нумай руководителĕсем хĕле кĕме вăхăтра хатĕрленес тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемеççĕ, профсоюз организацийĕсем çав ĕçе куллен тĕрĕслесе тăмаççĕ.

ВЦСПС секретариачĕ çапла йышăнать:

Профсоюзсен Центральнăй Комитечĕсене 1945 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче подсобнăй хуçалăхсемпе совхозсем хĕле кĕме хатĕррипе хатĕр марри́е наркоматсемпе пĕрле тĕрĕслесе туса çакăн пек тутарма хушас:

а) сивĕсем килсе çитиччен рабочисемпе служащисен хваттерĕсене тата культурăпа йăла учрежденийĕсене (столовăйсене, яслисене, мунчасене, клубсене тата ыттисене те) пурне те лайăх юсаса хумалла;

б) выльăх витисене юсаса, ăшă ямалла мар тумалла, выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлесе хумалла тата турттарса пымалла, силос хывмалли плана тултарасси çине уйрăмах хытă çаврăнса пăхмалла;

в) хĕл валли вутă кирлĕ таран хатĕрлесе хурса турттарса тухмалла.

Тĕрĕсленин итогĕсене подсобнăй хуçалăхсемпе совхозсенчи рабочисемпе служащисен пухăвĕсенче тата профсоюзсен Центральнăй Комитечĕсен Президиумĕсен ларăвĕсенче сӳтсе-явмалла.

Çакна пурнăçа кĕртни çинчен ВЦСПС-а ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пĕлтермелле.

ВЦСПС Председателĕ В. КУЗНЕЦОВ.

СССР НАУКА АКАДЕМИЙĔН ХУСАНТИ ФИЛИАЛĔ

ХУСАН, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Хусанта СССР Наука академийĕн филиалĕ уçăлать. Филиал президиумĕн председателĕ заместителĕ Миропольский профессор ТАСС корреспондентне çапла каланă: — СССР Наука академийĕн Хусанти филиалĕ пĕр Тутар республикишĕн кăна паллă пулса тăмасть, вăл пĕтĕм вăтам Атăл тăрăхĕнчи наука центрĕ пулса тăрать. Академин Хусанти филиалне çак институтсем кĕреççĕ: хими, биологи, физикăпа техника, чĕлхе, литература, истори институчĕсем, çавăн пекех тата шыв ресурсĕсемпе энергетика секторĕ.

ЛЕНИНГРАДА ПАТТĂРРĂН ХӲТĔЛЕНИНЕ ĔМĔРЛĔХЕ ПАЛĂРТСА ХĂВАРМА

ЛЕНИНГРАД, сентябрĕн 27-мĕшĕ (ТАСС). Ленинградри архитекторсем, — тесе каланă ТАСС корреспондентне Ленинград хулин главнăй архитекторĕ Н. В. Баранов, — Ленинград паттăррăн хӳтĕленнине ĕмĕрлĕхе палăртса хăварас тесе питĕ вăйлăн ĕçлеççĕ.

Хулана юсаса ура çине тăратмалли планра Ленинграда хӳтĕленине асăнтармалли пысăк памятник тума тата Мускав шоссе çулĕ çинче, Стачка урамĕнче, Шлиссельбург проспектĕнче триумфальнăй аркăсем тума палăртса хунă.

Ораниенбаумра, Петродворецра, Пулков сăрчĕсем çинче, Колпинăра, Петрокрепосра, Ладога кӳлĕн икĕ вĕçĕнче, Ладога кӳллине хĕвеланăçĕнчипе хĕвелтухăçĕнчи сыранĕсенче паттăррăн çапăçнă вырăнсенче тата 5-мĕш номерлĕ поселокра — 1943 çулта блокадăна татнă хыççăн Ленинград фрончĕпе Волхов фрончĕн çарĕсем пĕрлешнĕ çĕрте—памятниксем лартаççĕ.

Совет çĕршывĕ тăрăх

Ӳкерчĕк çинче: аслă вырăс художникĕ И. Е. Репин. Вăл вилнĕренпе паян 15 çул тултарчĕ.

САД ÇИМĔÇĔСЕН ПĔТĔМ РОССИЙĂРИ ВЫСТАВКИ

РСФСР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ кăçалхи октябрь уйăхĕнче сад çимĕçĕсен выставкине уçать. Выставкăра сад çимĕçĕсен колхозсенче тата уйрăм хуçалăхсенче ӳстерме сĕнекен яланхи сорчĕсене тата çĕнĕ сорчĕсене кăтартаççĕ. Выставкăна çаксем хутшăнаççĕ: Мичурин ячĕпе тăракан Наукăпа тĕпчев институчĕ, Мичурин ячĕпе тăракан Центральнăй генетически лаборатори, Тимирязев ячĕпе тăракан Ялхуçалăх академийĕ, Молотов ячĕпе тăракан Никитски ботанически сад, наукăпа тĕпчев институчĕсем, Наркомземпа Наркомпищепромăн сăнавлă станцийĕсем. (ТАСС).

Документлă çĕнĕ фильм

«ЯПОНИ ПАРĂННИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН АКТА АЛĂ ПУСНИ»

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинематографи комитетĕнче «Япони парăнни çинчен калакан акта алă пусни» ятлă фильм кăтартнă. Çав фильма ултă чи лайăх кинооператор —Сталинла премии лауреачĕсем Ошурков, Микоша тата Погорелый, операторсем Посельский, Руденков тата Сологубов ӳкерсе илнĕ. Фильма С. Бубрик режиссер майлаштарнă.

Экран çинче 1945 çулхи сентябрĕн 2-мĕшĕнчи историллĕ куна паллă туса хунă. Токио заливĕнче союзлă державăсен карапĕсем тăраççĕ. Чи малта Америкăн 45.000 тонна таякан «Миссури» линкорĕ тăрать. Çав карап çинче Япони парăнни çинчен калакан акта алă пусмалла. «Миссури» линкор Япони столици çине пуринчен малтан пеме пуçлачĕ.

Акта алă пуснин пур тапхăрĕсене те ӳкерсе илнĕ. Акă линкор çине Макартур генерал хăпарать. Ун хыççăн союзлă державăсен делегацийĕсем тата хăпасем хăпараççĕ. Совет делегачĕсен ушкăнĕ пырать, ăна К. Деревянко генерал-лейтенант ертсе пырать. Акă Япони делегацине илсе пыраççĕ. Пурте шăп тăраççĕ.

Токио вăхăчĕпе 10 сехет те 30 минут. Микрофон умне Макарутур генерал пырса тăрать. Вăл çак акта мĕншĕн алă пусни çинчен калать. Унтан сĕтел патне Японин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Сигемицу пырать. Япони парăнни çинчен калакан акта вăл пуриччен малтан алă пусать, ун хыççăн ăна Японин генеральнăй штабĕн начальникĕ Умэдзу генерал алă пусать, унтан вара Союзлă нацисен представителĕсем тата СССР представителĕ К. Деревянко генерал-лейтенант алă пусать.

Японецсем карап çинчен каяççĕ. Токио бухти çийĕпе союзлă державăсен сывлăшçар карапĕсем йĕркеллĕн вĕçсе иртеççĕ.

Çитес кунсенче çав фильма кинотеатрсенче кăтартма пуçлаççĕ. (ТАСС).

Ӳкерчĕк çинче: Совет морякĕсем-десантникĕсем Порт-Артур бухтинче СССР Тинĕс-Çар Флочĕн флагне тăратса лартаççĕ.

Сумгаит хули

БАКУ, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Баку хулинчен 35 километрта промышленноçлă çĕнĕ хула—Сумгаит хули тăваççĕ. Электричествăпа ирĕлтерсе сыпăçтарнин вăйлă çути йăлт-ялт курăнса каять, çуртсен никĕсне хываççĕ, стенисене тăваççĕ.

Çĕнĕ хулари чи пысăк предприяти — трубасем тăвакан завод пулать. Вăл Азербайджанри, Грознăйри, Эмбăри нефть промышленноçĕ валли нефть юхтармалли тата шăвармалли трубасем çителĕклĕ туса тăрĕ. Çав гигантăн чи малтан хута ямалли пайĕ те Совет Союзĕнче вăрçăччен пулнă труба заводĕсенчен кирек хăшĕнчен те вăйлăрах пулать. Заводăн цехĕсенче трубасем тумалли мĕнпур ĕçе — хурçă шăратниччен пуçласа трубасем туса кăларас ĕçсене пурне те тăваççĕ. Халь çав завода тума кирлĕ цехсене тата чугун çулсене тăваççĕ.

Сумгаит хулинче ытти предприятисем те пулаççĕ. Пысăк заводсем тавра пластмассăран тĕрлĕ япаласем тăвакан фабрикăсем, мастерскойсем, гаражсем, складсем ӳссе ларĕç. Теплоэлектроцентралĕн чи малтан тумалли пайне хута яна ĕнтĕ.

М. И. КУТУЗОВ ÇИНЧЕН ÇЫРНĂ КĔНЕКЕНЕ 14 ЧĔЛХЕПЕ ПИЧЕТЛЕСЕ КĂЛАРМАЛЛА ТУНĂ

Кутузов çуралнăранпа 200 çул тултарнă тĕле ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Пропагандăпа агитаци управленийĕ «Михаил Илларионович Кутузов» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларнăччĕ. Халĕ Ют çĕршывсен чĕлхисемпе кăларакан литература издательстви çав кĕнекене 14 чĕлхепе пичетлесе кăлармалла тунă. Вăл кĕнеке акăлчан, француз, поляк, итальян тата ытти чĕлхесемпе те тухать. (ТАСС).

Поэт—гражданин

(К. Рылеев çурални 150 çул тултарнă тĕле)

1815 çулта çуркунне вырăссен çамрăк офицерĕ Кондратий Рылеев çапăçури çара тухса кайнă. Ун чухне вырăс çарĕ Европăри пысăк походра пулнă. Вырăс çарĕнчи çамрăксен ытти представителĕсемпе пĕрле пулас декабрист тата поэт çурмафеодаллă Европăри государствăсенче «кивĕ йĕркесем» арканнине сăнанă, политика тĕлĕшĕнчен çав тери пысăк улшăнусем пулса пынине курнă. Рылеев Парижран хăйĕн юлташĕ патне çапла çырса янă: «Халăхн вăхăтра пулса иртекен событисем çав тери тĕлĕнтерессĕ, вĕсем тĕнчере ку таранччен пулса иртнĕ событисенчен чылай вăйлăрах... Вунă çултан та кăтăкрах вăхăт хушшинче вунă государство таран çĕнĕрен çуралса арканса кайнине, темиçе монарх çĕкленсе анса ларнине мĕнле тĕрĕслесе пăхмалла-ши».

Вырăс офицерĕсемпе салтакĕсем Францире нумаях пулмасть пулса иртнĕ французсен революцине хăйсен куçĕпе курнă. Тĕнчере ирĕклĕхне пĕртанлăх лозунгĕсем янăраса тăнă. Çавăнпа та ĕнтĕ чикĕ урлă пуçласа каçнă çамрăксем çĕнĕ лару-тăрува кăмăлласа йышăннинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук.

Россиăра феодаллă стройпа килĕшменни тахçанах палăрса пынă. Радищевах крепостла правăна хирĕç тухса каланипе çынсене пăлхантарнă. Вырăссен малта пыракан çыннисем политика тĕлĕшĕнчен улшăнусем тума кирли патне шухăшласа çитнĕ, конституци çинчен ĕмĕтленнĕ, чураланнă хресченсене ирĕке кăларасси çинчен шутланă. Чурасен ĕçĕ еврĕлĕ çинчен, обществăпа культура пурнăçне аталанма чарса тăракан йывăр ĕç çинчен нур çĕрте те калаçнă.

«Мĕн сăпкаранах
Ирĕклĕх кăмăлĕ çунать ман ăшра»,—

тесе каланă Рылеев геройĕсенчен пĕри. Çакă ĕнтĕ вăл вăхăтри малта пыракан мĕнпур çамрăк ăрăвăн сасси пулнă. Наполеон çарне ăнăçлăн аркатса тăкнă хыççăн, Европăри поход хыççăн ирĕклĕх çинчен вăйлăрах та вăйлăрах калаçма пуçланă.

Тăван çĕршыва таврăннă çамрăксем крепостла йĕркен мĕнпур йывăрлăхне хытăрах та хытăрах туйма пуçланă. Тĕрлĕ кружоксемпе пухусенче хĕрӳллĕ тавлашусем пуçланнă. Малтанхи вăхăтрах дворянсен прогрессиллĕ ушкăнĕнче çĕршыва халăхпа тытса тăрас йĕркене нимĕн тавлашу-хирĕçӳсĕрех тума пулать текен шухăш пуçпулса тăнă. Чуралăх «патша хушин тăрăх» арканса кайăс вăхăт çитесси çинчен ĕмĕтленнĕ. Анчах та çак ĕмĕтсем часах сирĕлсе кайнă. Вара татăклă ĕçсем тума ыйтакан сасăсем уçăмлăрах та уçăмлăрах илтĕнме пуçланă.

Пулас декабристсенчен нумайăшĕ хăйсен умĕнче тăракан задачăсен мĕнпур йывăрлăхĕпе кăткăслăхне лайăх ăнланнă: çав тери пысăк государствăра офицерсен пĕчĕк ушкăнĕн политикăллă улшăну тумалла пулнă. Вырăссен малтанхи революционерĕсем массăран—кивĕ обществăна татăклăн çĕнетме пултаракан вăйран пите аякра пулнă. Анчах та çав самодержави влаçне хирĕç кĕрешме çирĕп шухăш тытнă çынсен гражданла хăюлăхĕ калама çук пысăк пулнă. Вĕсем, патриотла шухăшсене парăнса, кирек епле пысăк çухатусем те тума хатĕр пулса, вăйлă тăшмана хирĕç çапăçăва тухнă. Вĕсем халăха ирĕке кăлармалли çул кĕрешӳпе юн урлă выртнине пĕлсех хăйсен пуçĕсене хунă.

Декабристсен ĕçĕ ахаль çухалман, —çакна вĕсем хăйсем те ĕненсе тăнă. «Пирĕн асаплă ĕç ахаль çухалмĕ: хĕлхемрен çулăм пуçланса кайĕ», — тесе çырнă декабристсем Çĕпĕрти ссылкăран Пушкин патне. Вырăс революционерĕсен тепĕр ăрăвне кĕрекен Герцен декабрĕн 14-мĕшĕнчи çынсене «геройсен фаланги» тесе ят панă. Декабристсем çинчен Герцен каланине ырласа, Ленин çапла каланă: «Вĕсем темĕнле улăпсем, мĕн ура тупанчен пуçласа пуç тӳпине çитичченех таса хурçăран туптаса тунă скерсем, паттăр ĕçсем тума хатĕр воинсем, хурлăхпа куççулĕ тата чуралăх ăшĕнче çуралнă ачасене таса çитĕнтерес тесе, çамрăк ăрăва çĕнĕ пурнăç çинчен шухăшламалла тăвас тесе, куçа кĕретĕнех вилĕме курса çапăçăва тухнă çынсем пулаççĕ».

Çав куçа кĕретĕнех вилĕме курса çапăçăва тухнă паттăрсен хисепне Рылеев та кĕнĕ. Вăл 1825 çулхи декабрь уйăхĕнчи тĕтреллĕ кун восстани туса Хĕллехи двореца тытса илме хатĕрленнĕ çынсемпе пĕрле пулнă. Анчах та декабристсем кĕрешĕве иртерех тухнă, вĕсене халăх массисем пулăшма пултарайман, çавăнпа та вара самодержавие парăнтарайман.

Декабристсен восстанине тискеррĕн пусарнă. Çав кунах каçхине Рылеева арестленĕ. Следстви пынă вăхăтра вăл сур çул ытла Петропавловски крепоçре ларнă. 1826 çулхи июлĕн 13-мĕшĕнче восстание ертсе пынă тепĕр тăватă руководительпе пĕрле (Бестужев-Рюминпа, Каховскипе, Пестельпе тата Муравьев-Апостолпа пĕрле) Рылеева çакса вĕлернĕ.

Рылеевăн поэзири творчестви унăн кĕрешӳри мĕнпур ĕçĕпе, крепостла йĕркене хирĕç протест тунипе таччăн çыхăнса тăрать. Вăл—поэт-трибун тата агитатор—политикăллă кĕрешӳ валли, пултаруллă творчество валли çуралса çитĕннĕ. Вăл чи малтанах хăйĕн ĕçне Тăван çĕршывăн ырлăхĕшĕн пама, халăха ирĕке кăларасшăн пама тăрăшнă.



Гражданссемшĕн тăрăшас шухăш Рылеевăн мĕнпур творчествинче—чи малтанхи йĕркерен пуçласа юлашки йĕркене çитиччченех—уçăмлăн палăрса тăрать. Вăл пуриншĕн те паллă «Дума» тата «Войнаровский» поэма çырнă. Çав поэма хыççăн Рылеева «поэт-гражданин» тесе ят панă. Иртнĕ вăхăтри вырăс писателĕсенчен çавнашкал ята илтме тивĕçлĕ пулнисем калама çук сахал пулнă. «Войнаровский» поэмăн умстатьинче Рылеев çапла асăрхаттарнă: «Эпĕ поэт мар, эпĕ гражданин». Çак пуплев вара каярахпа вырăссен политикăллă поэзинче лозунг пулса тăнă. Некрасов творчествинче те çак формула таранăн палăрать. Рылеев поэзире аслă искусствăпа политикăна пĕтĕçтерекен çав тери пысăк представитель пулнă. Вăл хăй вăхăтĕнчи малта пыракан идейăсемшĕн тăрăшнă. Ун çинчен Герцен Рылеев пирки çырнă статьяра лайăх каласа парать: «Вăл хăйĕн кашни поэминче, кашни строфинче, кашни йĕркинче поэт та гражданин та пулнă. Унăн сăввисенче хăйне-хăй шеллеменни, халăха çав тери юратни тата тăшмана курайманни палăрса тăнă».

1820 çулта «Невский зритель» журналра унăн «К временщику» ятлă кулăшла сăвви пичетленсе тухнă. Çакă ĕнтĕ политикăллă пурнăçа Рылеев уçăмлăн хутшăннă тапхăр пулса тăрать. Хăйĕн эпиграммисенче «пĕтĕм Россиăна хĕсĕрлекен» çав тери вăйлă Аракчеева тăрă шыв çине кăларнă Пушкин пекех, Рылеев патшан юратакан çыннине çав тери хăюллăн питленĕ. Ăна халăхпа Тăван çĕршывăн тăшманĕ тесе каланă:

«Надменный временщик, и подлый и коварный,
Монарха хитрый льстец и друг неблагодарный,
Неистовый тиран родной страны своей,
Взнесенный в важный сан пронырствами злодей!»

Çак кулăшла сăвва пите ĕлĕк-авалхи классиксем еврĕлĕ çырнă пулин те, çамрăк автор ăна кама тĕллесе çырнине питĕ тĕрĕс кăтартса панă. Кулăшла сăвва пурте юратса вуланă. Поэта кунăшăн хытă ответ тыттарĕç тесе шутланă. Анчах та кулăшла сăвва крепостла Россия условийĕсенче çырнине, «çĕршыва чăннипех тытса тăракан «временщик» хăйĕн кăмăлне кайман çынсене Çĕпĕре янă, касаматсене хупса лартнă вăхăтра çырнине манмалла мар.

«Временщика» тĕрĕслĕх сучĕ умне тăратма пĕтĕм халăха каласа панă вăхăтра,—тесе аса илнĕ Рылеевпа пĕр вăхăтра пурăннă çын,—Россиăра çакăн пек лару-тăру пулнă... Çак ĕмĕрне илтмен чăнлăхпа ӳпкев сасси илтĕнсен, чĕчĕ ачи улăппа кĕрешме тытăнсан, столипăри çынсем мĕн тери хăраса тĕлĕнни ахалех паллă ĕнтĕ. Харсăр поэта тата унпа пĕр шутлисене ответ тыттарса пĕтерсе тăкаççĕ тесе шутланă; анчах та кăмăлне хуçнă вельможа кулăшла сăвăра хăйне-хăй пĕлме пултарни ытлашши тĕрĕс те ытлашши паллă пулнă.:. Çакă ĕнтĕ Рылеев самодержавие пĕрремĕш хут пырса çапни пулнă».

Çапла вара Рылеев феодаллă-крепостла режима хирĕç кĕрешме пуçланă. Çав кĕрешӳ поэтăн мĕн юлашки кунне çитиччченех чарăнман.

Аракчеев çинчен хăйĕн кулăшла сăввине çырнă хыççăн, Рылеев малта пыракан журналсем çине çырма пуçланă, литературăри паллă çынсемпе паллашнă, унтан вара декабристсемпе те хутшăнса кайнă. Хăйĕн тусĕпе тата хăйпе пĕр пек шухăшлакан А. Бестужевпа пĕрле вăл «Полярная звезда» ятлă альманах кăларма тытăннă. Пушкинăн тусĕ И. Пущин Рылеева «Декабристсен çурçĕрти вăрттăн обществине» кĕртнĕ те, вăл вара часах унăн руководителĕсенчен пĕри пулса тăрса агитаци ĕçне анлăн хутшăннă, хăйсен ретне Грибоедов йышши паллă çынсене хутшăнтарма тăрăшнă.

Пестельпе паллашни Рылеева демократиллĕ шухăшсенче татăкланах çирĕплентерсе тăма пулăшнă. Вăл вара вăрахăн пулса пыракан конституци программинчен уйăрăлнă. Самодержавие хирĕç уçăмлă восстани тăвас шухăш ăна хытăрах та хытăрах çавăрса илнĕ. Вăл халăхшăн, чăнлăхшăн пуçне хума хатĕрленнĕ, хăйĕн сăввисенче малтанах çапла каланă:

«Известно мне: погибель ждет
Того, кто первый восстает
На утеснителей народа,—
Судьба меня уж обрекла,
Но где, скажи, когда была
Без жертв искуплена свобода?»

Рылеевăн поэзийĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенчи малта пыракан юхăма хавхалантарнă политикăллă шухăшсене уçăмлăн та йĕркеллĕн каласа пани пулать. Хăйĕн творчествине вăл «çĕршыври çынсен чунĕнче çĕршыва юратнин тата ирĕклĕх туйма тăрăшнин сисĕмсене пуçласа ярас тесе» тунă ĕçсем вырăнне хунă. Çак задачăна татса парас тесе вăл «Думăна», Наливайкопа Войнаровский çинчен калакан поэмăсене çырнă. Çак произведенисенче патриотла таран шухăшсем палăрса тăраççĕ. Вĕсенчех патша режимне тăрă шыв çине кăларакан агитациллĕ юрăсем пур, çав юрăсем вара каярахпа халăх хушшинче питĕ саралнă.

Поэт-декабристăн пултаруллăхĕ çулран çул çирĕпленсе пынă. Вăл ĕлĕкхи жанрсенчен чăн-чăн реализм патне куçнă. Пушкин Рылеевăн малтанхи шухăшĕсене килĕштермен. Каярахпа çырнă унăн сăввисене вуланă хыççăн, Пушкин вара çапла каланă: «Вăл сасартăк çав тери ӳссе кайнине эпĕ ниепле те ăнланса илейместĕп». Рылеевăн хăшпĕр шухăшĕсем халăх юррисем пулса тăнă; çавăн пек юрăсен шутне Ермак, Иван Сусанин çинчен хывнă юрăсем кĕреççĕ.

Унăн шухăшĕсем пурте историллĕ пĕрпĕр тапхăра пырса тивеççĕ. Хăйĕн шухăшĕсенче поэт пирĕн отечественнăй историн паттăр сăнарĕсене, вырăс çĕршывĕшĕн кĕрешнĕ çынсен сăнарĕсене чĕртсе çĕнĕрен кăтартнă. Çакăн пек çынсен шутне чи малтанах Олег Вещий, Дмитрий Донской, Иван Сусанин, Богдан Хмельницкий, Петр Великий кĕреççĕ. Истори тĕлĕшĕнчи тĕрĕслĕхшĕн тăрăшса Рылеев Тăван çĕршывăшăн тунă вăйлă шухăш-кăмăла, пысăк сисĕм-туйăма, хăюллă ĕçсене, паттăрлăха сăнласа панă. Хăйĕн геройĕсене вăл вăрçăра та, ахаль пурнăçра та пахалăх енчен илсе кăтартнă. Поэт шухăшĕ тăрăх, унпа пĕр вăхăтра пурăннă поэтсемпе писательсене шăпах ĕнтĕ çакă çитмен.

Хăйĕн тĕп шухăшĕсене Рылеев «Войнаровский» тата «Наливайко» поэмăсенче каласа панă. Çав поэмăсене поэт Украинăн иртнĕ вăхăтри кунçулĕ çинчен çырнă. Çав поэмăсем, историллĕ событисем çинчен каласа параççĕ пулин те, вулакансемшĕн питĕ тăран шухăшлă поэмăсем пулса тăраççĕ. Рылеев хăйĕн паллă пултарулăхне анлăн кăтартса парниччченех вилнĕ. Анчах çапах та, вăл тума ĕлкернĕ ĕçсем те пирĕн культурăпа пирĕн историре паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Рылеев чĕнсе каланисем унпа пĕр вăхăтра пурăннă çынсен чĕрисене çĕç пăлхантарман: вĕсем хĕрĕхĕмĕшпе утмăлмĕш çулсенчи революционерсене, тата каярахри революционерсене те кĕрешĕве чĕннĕ. Унăн сăввисенчи поэзиллĕ хавхалану Лермонтовăн, Огаревăн, Некрасовăн лирикисенче те палăрать. Хăйĕн пурнăçне хамăрăн Тăван çĕршывăн телейлĕ пуласлăхĕшĕн панă поэт-декабристăн гражданла паттăр ĕçĕ халăх асĕнчен ĕмĕрне те каяс çук.

Пирĕн совет çыннисем Россиăн историне, Россиăра пурăннă паллă çынсене мухтанса аса илеççĕ. Рылеев ĕнтĕ пирĕн историе тăвакан çынсен шутне кĕрет. 1914 çулта Ленин «Великороссен напилллĕ мухтавлăхĕ çинчен» çырнă статьяра çапла каланă: «Пирĕн илемлĕ Тăван çĕршыва патша палачĕсем, дворянсемпе капиталистсем мĕн тери пусмăрласа мăшкăлланине пĕлсе тăма питех те йывăр. Эпир çакăн пек пусмăрлăх пирĕн хушшăмăртан, великоруссен хушшинчен Радищев, декабристсем, 70-мĕш çулсенчи революционер-разночинецсем еврĕлĕ çынсем çитĕнтерме пултарнăшăн мухтанатпăр. Çакăнпа усă курса аслă вырăс халăхĕн рабочи класĕ 1905 çулта массăсен хăватлă революциллĕ партине туса хучĕ».:.

Ленинăн çак сăмахĕсем ĕнтĕ пирĕн историре декабристсем мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине лайăх хакласа параççĕ. Çак сăмахсем ĕнтĕ пĕтĕмпех восстанисен çулпуçĕ, çулăмлă поэт Кондратий Рылеев çинчен каланă сăмахсем пулса тăраççĕ.

В. ЖДАНОВ.

Сирипе Ливанри армянсен митингĕсем

БЕЙРУТ, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 25-мĕшĕнче Бейрут, Алеппо, Дамаск тата Захле хулисенче армянсен митингĕсем пулса иртнĕ. Митингсене Сирири тата Ливанри армянсен наци совечĕ организациленĕ.

Бейрут хулинче пулса иртнĕ митингра 10.000 армян ытла пулнă. Сирипе Ливанри армянсен наци совечĕн председателĕ Адам Мануэлян сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл çакна палăртса каланă: Турци вăйпа туртса илнĕ армян çĕрĕсене каялла таварса пама тата çав çĕрсене Совет Арменийĕпе пĕрлештерме ыйтмалли вăхăт çитрĕ, тенĕ.

Юлашкинчен митингра Сталин Генералиссимуса, Трумэн президента тата Эттли премьер-министра ямалли резолюцие вуласа панă. Резолюцире Сирипе Ливанра пурăнакан 200.000 армян вĕсенчен туртса илнĕ çĕрсене Совет Арменийĕпе пĕрлештерме ыйтаççĕ. Çав резолюцие митинга пухăннă халăх пурте пĕр кăмăллă пулса йышăннă.

Совет Союзĕпе Венгри дипломатиллĕ çыхăнса тăма пуçланине Венгри халăхĕ çав тери савăнса кĕтсе илнĕ

БУДАПЕШТРИ ПЫСĂК ДЕМОНСТРАЦИ

БУДАПЕШТ, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Совет правительстви Венгрипе дипломатиллĕ çыхăнса тăма йышăннипе Венгри халăхĕ питĕ савăнать. Паян Будапешт хулинче пысăк демонстраци пулса иртнĕ. Демонстрацире темиçе вунă пин çын пулнă.

Демонстрантсем çакăн пек лозунгсем йăтса пынă: «Сывă пултăр Совет Союзĕпе Венгри туслăхĕ!», «Сывă пултăр Генералиссимус Сталин!», «Сывă пултăр пирĕн хĕвелтухăçĕнчи хăватлă кӳршĕ—Совет Союзĕ!».

Демонстрантсем, Венгрипе Совет Союзĕн флагĕсене йăтса, Будапешт хулин тĕп урамĕсемпе утса тухнă.

Союзниксен Контроль Комиссийĕн çуртĕ умĕнче митинг пулса иртнĕ. Çав çурт умĕнче Андраши урамĕнче темиçе вунă пин çын пулнă. Союзниксен Контроль Комиссийĕн председателĕ Совет Союзĕн Маршалĕ К. Е. Ворошилов, унăн заместителĕ Свиридов генерал-лейтенант, Контроль Комиссийĕн политика советникĕ Пушкин, Контроль Комиссийĕн ертсе пыракан работникĕсем тата Венгрири демократиллĕ партисен лидерĕсем балкон çине тухса тăрсан, халăх хавасăн кăшкăрса ала çупнă.

Митинга Будапешт хулин бургомистрĕ Ваш Золтан уçнă. Вăл Совет правительствине Венгрие шанса унпа туслă пурăнма тăрăшнăшăн, унпа дипломатиллĕ çыхăнса тăма сĕннĕшĕн столицăри çынсен ячĕпе тав тунă.

Унтан митингра демократиллĕ партисен лидерĕсем Сакашич Арпад, Тильди Золтан, Береш Петер, Кетли Анна, Ракоши Матиас сăмахсем тухса каланă. Вĕсем Совет Союзĕпе Венгри дипломатиллĕ çыхăнса тăма пуçланипе пĕтĕм венгер халăхĕ калама çук хытă савăнни çинчен каласа панă. Совет правительстви пуçлăхне Сталин Генералиссимуса тата Совет правительстви Венгрири представительне Ворошилов Маршала тав тунă. Халăх çав çынсем каланă чухне, Совет Союзĕпе Венгри туслăхне ырласа тата И. В. Сталин Генералиссимуса, СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарне В. М. Молотова, Совет Союзĕн Маршалне К. Е. Ворошилова хисеплесе, саламлă сăмахсем каланă.

Митингра Союзниксен Контроль Комиссийĕн политика советникĕ Пушкин сăмах тухса каланă.

Юлашкинчен халăх Совет Союзĕпе Венгри гимнĕсене юрланă.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕМ ВЕНГРИПЕ ДИПЛОМАТИЛЛĔ ÇЫХĂНСА ТĂМА ПУÇЛАССИ ÇИНЧЕН

БУДАПЕШТ, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 25-мĕшĕнче Венгри министрĕсен совечĕн ларăвĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствин сĕнĕвне йышăннă. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви Венгрипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинче дипломатиллĕ çыхăну пуçласа яма сĕннĕ.

ВЕНГРИН НАЦИ ПУХĂВНЕ СУЙЛАМАЛЛИ КУНА ПАЛĂРТСА ХУНĂ

БУДАПЕШТ, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрин вăхăтлăх правительствин министрĕсен совечĕ васкаса пухнă ларура Венгрин наци пухăвне кăçалхи ноябрĕн 4-мĕшĕнче суйлама йышăннă.

ЭЙЗЕНХАУЭР ГЕНЕРАЛ НИМĔÇСЕН 5 ПРЕДПРИЯТИНЧИ ОБОРУДОВАНИНЕ СӲТСЕ ИЛМЕ ПРИКАЗ ПАНĂ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Эйзенхауэр генерал нимĕçсен промышленноçри пилĕк чи пысăк предприятийĕнчи оборудованине сӳтсе илме приказ панă. Çав оборудование репарапи шутне кĕртсе илсе каймалла. Вăл предприятисем шутĕнче çаксем пур: шарикоподшипниксем тăвакан питĕ пысăк завод тата Бремен хулинчи суднăсем тăвакан предприяти. Çак ыйту пирки пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: репарапи шучĕпе илмелли çав оборудование союзниксенчен кам илессине халĕ татса паман-ха, тенĕ.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 27-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Бирнс господин председатель пулнă.

Ларура французсен вăрçăра курнă сиенне саплама ыйтса çырнă çырăвне сӳтсе-явнă.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн çитес ларăвĕ сентябрĕн 28-мĕшĕнче ирхине 11 сехет те 30 минутра пулмалла.

Совет çар администрацийĕн штабĕнче

ГЕРМАНИН СОВЕТ ÇАРĔСЕМ ОККУПАЦИЛЕНĔ ТЕРРИТОРИЙĔНЧЕ ИСКУССТВО УЧРЕЖДЕНИЙĔСЕНЕ МĔНЛЕ ĔÇЛЕТТЕРМЕ ПУÇЛАССИ ÇИНЧЕН ТАТА ÇАВ УЧРЕЖДЕНИСЕН МĔНЛЕ ЙĔРКЕПЕ ĔÇЛЕСЕ ТĂМАЛЛИ ÇИНЧЕН

БЕРЛИН, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Искусство учрежденийĕсене мĕнле ĕçлеттермелли çинчен калакан хăйĕн приказĕнче Совет çар администрацийĕн Главноначальствующийĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Жуков Германин совет çарĕсем оккупациленĕ территорийĕнчи искусство учрежденийĕсемпе предприятийĕсен тĕп задачисене кăтартса панă. Çав задачăсем çаксем:

а) искусствăна нацистла, расăлла, милитаристла тата ытти реакциллĕ идейăсемпе туртăмсенчен пĕтĕмпех хăтарасси;

б) фашизмпа кĕрешес ĕçре тата Германи халăхне чăн-чăн демократи майлă вĕрентес ĕçре искусство учрежденийĕсемпе активлăн усă курасси;

в) пĕтĕм тĕнчери искусствăпа тата вырăс искусствине анлăн паллаштарасси.

Главноначальствующийн приказĕ совет çарĕсем оккупациленĕ территорире театрсене тата музыка учрежденийĕсемпе предприятийĕсене çак йĕркене уçмалли çинчен каласа панă:

Искусствăн мĕнпур йышши учрежденийĕсен руководителĕсене тата çав учрежденисен ĕç программисене Совет çар администрацийĕн органĕсем çирĕплетеççĕ. Берлинăн совет çарĕсем оккупациленĕ зонинче мĕнпур театрсен, драма, опера, оперета театрĕсен, симфони оркестрĕсен тата капеллăсен репертуарĕсене Совет çар администрацийĕн сутĕç пайĕнче регистрацилеççĕ, унта вĕсене нимĕçсен совет зонинчи сутĕç управленийĕ парать.

Совет çарĕсем оккупациленĕ территорире ытти хуласенчи мĕнпур театрсен, варьете театрсен, эстрадăсен, кабарэсен программисемпе репертуарĕсене Совет çар администрацийĕн провинцисенчи, федеральнăй çĕрсенчи органĕсем тата хуласемпе районсен комендачĕсем регистрацилеççĕ.

Главноначальствующийн приказĕ совет çарĕсем оккупациленĕ территорире тата Берлинăн совет зонинче нимĕçсен сутĕç управленийĕ е унăн вырăнти органĕсем ирĕк памасăр кирек мĕнле художествăллă выставка та уçма чарать.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОФСОЮЗСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔНЧЕ

ПАРИЖ, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕн сентябрĕн 26-мĕшĕнчи каçхи ларăвĕ 15 сехет те 45 минутра уçăлнă. Ларура Линдберг председатель пулнă.

Родезири профсоюзсен делегачĕ Гудвин чи малтан сăмах тухса каланă, вăл пĕчĕк çĕршывсенчи рабочисен организацийĕсен шухăшĕсене каласа панă. Ситрин калаççине асра тытса, Гудвин çапла ыйтнă: хăшпĕр делегатсем ыйтнă пек, политикăпа экономикăна пĕр-пĕринчен мĕнле уйăрма пулать-ха? Хальхи вăхăтра тĕнчипе çирĕп пĕрлешӳ туса хумалла. Çак ыйту колони пулса тăракан çĕршывсене уйрăмах хытă интереслентерет.

Унтан Австралири профсоюзсен делегачĕ Торнтон сăмах тухса каланă. Вăл пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацине халех туса хума кирли çинчен каланă.

Кун хыççăн США-ри Производствăллă профсоюзсен конгресĕн представительне Хиллмэна сăмах панă. Хиллмэн чи малтан çак конференцие пухнă организацисене, уйрăм илсе кăтартсан—Францири ĕç конфедерацине, тав тунă. Хиллмэн устав проектне администраци комитечĕн пур членĕсем те пĕр шухăшлă пулса йышăнни çинчен каланă. «Пирĕн ĕç халь ăнăçмасан, питĕ начар пулать, мĕншĕн тесен темиçе миллион ĕççынни çак конференцие шанса тăраççĕ».—тенĕ Хиллмэн.

Хальхи вăхăтра государствăсем пĕрпĕрипе мĕнле ыйтусем тĕлĕшпе каласççĕ, çав ыйтусем пирки профсоюзсем мĕнле шухăшлани çинчен пирĕн чăсрах авторитетлă каласа памалла. Çакна эпир пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацине туса хурсан çеç каласа пама пултаратпăр. Çав федераци тунă чухне эпир кунта панă сĕнӳсен пĕр пайне, уйрăм илсе кăтартсан—пĕчĕк çĕршывсен представителĕсене ытларах кĕртме сĕннине шута илĕпĕр. Юлашкинчен Хиллмэн миршĕн тата этемлĕх телейĕшĕн тăрăшса ĕçлеме чĕннĕ.

Чехословаки представителĕ Эбран устав проектне ырланă. Вăл та пĕчĕк çĕршывсен представителĕсене ытларах кĕртмелли çинчен тата ĕç тăвакан комитета йышларах çынла тума кирли çинчен каланă.

Ливанри рабочисемпе служащисен профсоюзĕсен пĕрлешĕвĕн делегачĕ Мустафа Арис çак конференци уйрăмах паха пулнине палăртнă. Вăл «хĕвеланăçĕнчи блок» тăвас тенĕ шухăша хирĕç каланă. «Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕ тĕнчери трестсемпе картельсен юрăхсăр ĕçĕсене хирĕç кĕрешмелли хатĕр те пулса тăрĕ,—тенĕ Мустафа Эль Арис.— Пирĕн кунта ытла пĕчĕк ĕçсемпе аппаланса лармалла мар. Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен çĕнĕ организацине туса хуриччĕн кунтан тухса каймастпăр»,—тенĕ.

Африка делегачĕ Кокер устав проектне ырланă. «Анчах эпĕ 300.000 рабочи ячĕпе федераци исполкомне Африкăран икĕ представитель кĕртме ыйтатăп», тенĕ вăл.

Венгрири профсоюзсен представителĕ Коша çапла каланă: пĕтĕм тĕнчери транспорт рабочийĕсен пĕрлешĕвĕн членĕсем нумайĕшĕ пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕпе пĕрлешмелли çинчен калаççĕ, тенĕ.

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче Индири, Родезири, Палестинăри, Гамбири, Тринидадри, Кипрти, Ямайкăри, Ливанри, Сирири тата Египетри профсоюзсен делегацийĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлура пулнă çынсем çак конференцире пренире мĕнле шухăшсем каласа памаллине палăртнă. Йышăннă резолюцире вĕсем пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацине тăвас ĕçе тепĕр срока хăварассине хирĕç каланă. Резолюци устав проектне пăртак улăштарнипех йышăнма сĕнет.

АМЕРИКА КОРРЕСПОНДЕНЧĔ ШВЕЦИРИ ХАÇАТСЕМ ФАШИСТСЕМ МАЙЛĂ ПРОПАГАНДА ТУНИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат хăйĕн Парижри корреспонденчĕн Туиттин «Швецири хаçатсен пĕр пайĕ нацистсем майлă çырма тытăнать» ятлă статьине пичетлесе кăларнă. Çав статьяра Туитти Швецире тухакан хаçатсем, çав шутра «Афтонбладет» тата «Стокгольмс тиднинген» хаçатсем те, фашистсем майлă çырма тăрăшнине палăртать.

Туитти çапла калать: çав хаçатсен хуçи Торстен Крейгер яланах Гитлера пулăшса тăнă тата халь те гитлерла пропаганда туса тăрать, вăл Германи халăхне Гитлер Германне çĕнтерӳллĕн тавраçăссине ĕнентерме тăрăшать. Туитти Швецири хаçатсем çавăн пек çырнин хăрушлăхне кăтартса парать, союзниксем нацизма пур çĕрте те пĕтерсе лартас теççĕ пулсан, вĕсен Швецири хаçатсем нацистсем майлă çырнине хирĕç татăклă мерăсем йышăнмалла, тет.

США-РИ ЗАБАСТОВКĂСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Нефть тасатакан тата нефть юхтаракан заводсенчи рабочисем, темиçе кун каярах забастовка пуçласа янă. Çав забастовка халь кунсеренех аслăланса пырать. Нефтяниксен профсоюзĕ (вăл Производствăллă профсоюзсен конгресне кĕрет) ĕç укçине хăпартма ыйтать.

Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, нефть компанийĕсен ултă штатри предприятийĕсенчи 25.000 рабочи тата ытти темиçе пин рабочи-нефтяник забастовка тума йышăннă.

Нефтяниксен профсоюзĕн председателĕ Найт çапла каланă: çак забастовка предпринимательсем пĕтĕм США-ра пĕр коллективлă договор тума килĕшмен пирки пуçланса кайрĕ, тенĕ. Нефть компанийĕсем çĕнĕ договор тăвасси çинчен калаçма килĕшмесĕн, забастовка сарăлса кайĕ, тесе асăрхаттарнă Найт.

Ответлă редактор заместителĕ **Н. С. СТЕПАНОВ.**

Завода васкавлăн çакăн пек работниксем кирлĕ: инженерсем, техникэлектриксем, хурансен машинисчĕсем, турбинăсен машинисчĕсем, çĕркăмрăк паракан бригадирсем, монтерсем, токарьсем, слесарьсем.

Завод тата çав специальноçсемпе квалификациллĕ рабочисем вĕрентсе хатĕрлет.

Заводра çакăн пек курссем организациленĕ:

1. Инструкторсен, лаборантсен, химиксен тата электриксен-тĕпчевçĕсен курсĕ (вĕреннĕ чухне завод уйăхне 300—400 тенкĕ тӳлет).
2. Бухгалтерсен, счетоводсен, статистиксен тата шут ĕçне пĕлекен ытти работниксен курсĕ.
3. Шоферсен курсĕ.

Апат-çимĕçе уйрăм спискăри рабочисен нормипе параççĕ. Заводри столовăйра апатлантараççĕ. Ытти хуласенчен килнисене (пĕччен çынсене) общежитие вырнаçтараççĕ.

Вĕренме кĕнĕ чухне паспорт е хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, ĕç кĕнеки е юлашки вăхăтра ĕçленĕ вырăнтан панă справка памалла, юлашки вăхăтра ĕçлемен çынсен ял Совечĕ е колхоз панă справка тăратмалла. Çара каймаллисен çар билетне памалла. Апат-çимĕç пама пăрахнине кăтартакан справка памалла.

Курссенче октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ. Чугун çулпа е пароходпа килнисене завод çул укçи тӳлет.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, улица Карла Маркса, 80, Отдел кадров.

2—1.

Пĕтĕм Союзри ăмăртăва хутшăнса

Шупашкарти апат-çимĕç комбинатĕнчи работниксем Пĕтĕм Союзри Социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăйсен ĕç тухăçлăхне куллен ӳстерсе пыраççĕ. Ку уйăхра уйрăмах конфетсем тăвакан тата премĕксем тăвакан цехсем лайăх ĕçлерĕç.

Конфетсем тăвакан цехри В. Вдовина тата А. Зарницина работницăсем иккĕшĕ 4 çыншăн ĕçлесе, çиремкунлăхри задание 2-шер хут ирттерсе тултарчĕç.

Премĕксем тăвакан цехра А. Пиняева тата А. Потатуева работницăсем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Вĕсем çиремкунлăхри задание кашниех 110-шар процент пурнăçларĕç.

Мальтознăй цехри работниксем ку уйăхра чĕртавар пухас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Комбинат ку тарана çитсе мĕнпурĕ 1.5 тонна шăлан çырли пухнă. Ку ĕçре уйрăмăнах коммунист М. Платонова, А Суслина, Т. Кириллова, А. Казачкова тата С. Грутькова работницăсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем кашниех куллен 14—16 килограмм çырла пухаççĕ.

Ф. ТЕРЕШКОВ,
Хулари апат-çимĕç комбиначĕн директорĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-6_, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ял хуçалăх пайĕн—3-99, ăсĕлькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 9 23.

НТ 00412 Типография № 1 Управления ... при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ... 42 п. л. Тираж 16.000 экз.